# Чӗрӗлӗхе еплерех хӳтӗлетпӗр?

**Вӑрман, шыв-шур, уй-хир чӗр чунне пӗтесрен сыхласси – республика умнетухса тӑнӑ ҫивӗч ыйтусенчен пӗри. Тивӗҫлӗ орган ҫакӗҫе мӗнлерех пурнӑҫлать-ха? Чӑваш Республикин чӗр чун тӗнчин объекчӗсемпе вӗсем пурӑнакан вырӑнсене сыхлас, тӗрӗслес тата чӗрӗлӗхпе усӑ курассине йӗркелес енӗпе ӗҫлекен патшалӑх службин ертӳҫи Владимир КУЗЮКОВ хуравлать.**

**– Патшалӑхӑн эсир ертсе пыракан тытӑмне чӗр чун тӗнчин объекчӗсене, вӗсем пурӑнакан ҫӗре хӳтӗлеме, чӗрӗлӗхпе еплерех усӑ курнине тӗрӗслеме тата йӗркелеме ятарласа тунӑ. Тивӗҫе пурнӑҫласси мӗнлерех пырать?**

– Вӑл федерацин «Чӗр чун тӗнчи ҫинчен», «Сунар ӗҫӗ тата сунар вырӑнӗсем ҫинчен» саккунӗсемпе, административлӑ право йӗрки ҫинчен калакан кодекспа сыпӑнса пурнӑҫланать. Службӑн 26 инспекторӗ пӗтӗм хут ӗҫне вӗсемпе килӗшӳллӗн хатӗрлет. Кайӑкҫӑсем сунар йӗркине пӑхӑнман пирки пӗлтӗр административлӑ 94 ӗҫ пуҫарса яваплисене айӑпларӑмӑр. Сунар хуҫалӑхӗсен 5 ертӳҫи чӗрӗлӗхе шутлас, ӗрчетес тӗлӗшпе служба ҫирӗплетнӗ тата килӗшӳре палӑртнӑ тивӗҫе пурнӑҫа кӗртмен. Вӗсене ҫакӑншӑн 1-2-шер пин тенкӗлӗх штрафларӑмӑр. Вӗсен кайӑк электричество пралукӗнчен ҫунасчӗпе ҫакланса нумай вилет. Вӑл юпленекен тӗле кирлӗ пек тусан пӗри те шутран тухмӗ. Мӗнле майлаштармаллине электричество парса тӑракан организацисенче лайӑх пӗлеҫҫӗ. Вӗсен ертӳҫисене асӑрхаттаратпӑр пулин те ҫӗнӗлле ӑсталама тӑрӑшмаҫҫӗ. Саккуна пӑхӑнманшӑн административлӑ ӗҫ пуҫарса 2 пуҫлӑха айӑплама тиврӗ.

Кӑҫал уголовлӑ кодексӑн 258-мӗш статйипе /саккуна пӑсса сунар йӗркелени/ килӗшӳллӗн 5 ӗҫ пуҫарнӑ. Судья 3-не пӑхса йышӑну кӑларнӑ. Айӑплисем кӳнӗ тӑкака саплаштармашкӑн патшалӑх хыснине 75 пин тенкӗ хывтарма ыйтрӑмӑр.

**– Вӗсем тӗлӗшпе вӑрманта акт ҫырма ҫӑмӑл мар пулӗ. Инспектор – пӗччен, ӑна хирӗҫ – хӗҫ-пӑшаллӑ темиҫе сунарҫӑ. Кайӑкҫӑсем акт ҫыртарас мар тесе хӑйсене тытса чарнӑ ҫӗртен пӑрахса тарнӑ тӗслӗх чылай-и?**

– Пулкалать. Ҫапах пирӗн инспекторсем вӗсем пурӑнакан ял-хулана ҫийӗнчех ҫитеҫҫӗ, тӗл пулса документ хатӗрлеҫҫӗ. Йӗркене пӑснӑ вырӑна браконьерсем кӗтмен чухне ҫитме тӑрӑшаҫҫӗ. Паллах, кайӑкҫӑсен ушкӑнне хирӗҫ тӑма, вӗсене явап тыттарас пирки документ ҫырма йывӑр. Саккуна хӳтӗлесе хӗрӳ калаҫма, сасӑ хӑпартма е вӑрҫӑнма тивет.

**– Сут ҫанталӑкӑн уйрӑмах сыхлакан территорийӗ шутланакан «Бугуяновский», «Кумашкинский», «Калининский» саккаслӑхсенче сунар йӗркелеме, пӑшалпа ҫӳреме юрамасть. Вӗсенче браконьерсем чӗр чун тытнине Пӑкӑян, Кӑмаша, Калинино таврашӗнче кун кунлакансем лайӑх пӗлеҫҫӗ. Сӑлтавӗ начар хураллани пе сыхӑнман-и?**

– Вӗсем республикӑн Сут ҫанталӑк ресурсӗсен тата экологи министерствин тытӑмне кӗреҫҫӗ, пирӗн инспекторсем хураллаҫҫӗ. Анчах сыхласа ӗлкӗрейместпӗр. Мӗншӗн тесен ҫак саккаслӑхсене куллен тенӗ пек тӗрӗслесе ҫаврӑнма инспекторсен бензин ҫук. Ӑна туянма патшалӑх хыснинчен укҫа сахал уйӑраҫҫӗ. Хӑш-пӗр инспектора автомашинӑпа та тивӗҫтерейместпӗр. Хӑйсен транспорчӗпе усӑ кураҫҫӗ.

**– Манӑн шухӑшӑмпа – браконьерсенчен нумайӑшне явап тыттараймаҫҫӗ. Чӑваш Енре вӗсем иртӗхнӗрен те чӗр чун ӗрчеймест. Браконьерсемпе ӑнӑҫлӑрах кӗрешме службӑна мӗн ҫитмест?**

– Республика территорийӗ пысӑк мар, пурӑнакан йышлӑ. Кашни тӑваткал километрта сын шучӗпе эпир ҫӗр-шывра малтисен ретӗнче. Ҫавӑнпа Чӑваш Енре чӗр чуна ӗрчеме ҫӑмӑл мар. Этем ҫӳремен кӗтес вӑрманта ҫукпа пӗрех. Вӗсене ял-хула таврашӗнче йӑх тӑсма питӗ йывӑр. Чӗрӗлӗх хӑйӗн илемӗпе савӑнтартӑр тесен сынсен хӑйсен тӑрӑшмалла – ӗрчеме пулӑшмалла.

Службӑн браконьерсемпе тухӑҫлӑ кӗрешме вӑй ҫитмест. Пирӗн тытӑмра реформа пуҫланиччен инспекторсем хальхинчен икӗ хут ытларахчӗ. Патшалӑх службӑна уйӑракан укҫа вӗсене бензинпа ҫителӗклӗ тивӗҫтерме май памасть. Пирӗн автомобильсем – кивӗ. Кашни инспектора юр тӑрӑх ҫӳрекен транспорт параймастпӑр. Пӗтӗмлетсе каласан браконьерсене явап тыттарма чӑрмантаракан ыйту нумай.

**Юрий МИХАЙЛОВ**
**калаҫнӑ**